АСТĂВĂМ

# Суя хупланă чăнлăха тупма Хăюлăх кирлĕ

**Каяççĕ... Юлашкисем каяççĕ... Çак кунсенче кăна Аристарх Иванович Дмитриева, паллă журналиста, çыравçăна, куçаруçăна, юлашки çула ăсатрăмăр. Ку вăл чăваш литературишĕн, культуришĕн саплаштарма май çук çухату. Ун пек КУÇАРУÇĂ пирĕн тек çук. Пулаймĕ те. Пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕн 19-мĕшĕнче Иосиф Александрович Дмитриев-Трерăн чĕри тапма чарăнчĕ... Ун пек ШУХĂШЛАВÇĂ-ПОЭТ, хăй калашле, ÇĂВАÇ тек пулас çук пирĕн. Шел пулин те...**



«Трер поэзийĕ çав тери вĕри, тарăн, вăй-халлă, чăваш поэзийĕн çак тарана çити пухăннă мĕнпур вăйĕ, ыратăвĕ, хавасĕ палкаса çунса тăрать ун сăввисенче», «Чăваш поэзийĕнче ун ячĕ Çеçпĕл, Хусанкай, Айхи, Митта, Эйзин ячĕсемпе пĕр ретре тăма тивĕç» (Борис Чиндыков) пулсан та Иосиф Александровичăн пурăннă чухне пĕр сăвă кĕнеки тухман. Хаçат-журналта пичетленнĕ, темиçе автор хайлавĕсене пухса кăларнă кĕнекесенче кун çути курнă – уйрăм кĕнекен вара тухман. Борис Чиндыков пухса хатĕрленĕ «Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту» кĕнеке – «Иосифăн пĕрремĕш те юлашки поэзи кĕнеки».

Унăн сăввисем пĕр вăхăтрах тĕлĕнмелле хăватлă та лăпкă, пĕр вăхăтрах хăвна айăплăн туйнăн пусарăççĕ те хавхалантарса çунат хушаççĕ. Чĕптĕм-чĕптĕм вулатăп «Хĕрĕх Чалăш Хĕрлĕ Ту» кĕнекене, темиçе сăвă вулатăп та куçа хупса Иосиф Александровичпа тĕл пулнă, калаçнă самантсене аса илетĕп...

Аннепе
Кивçен илнĕ саспа калаçмаççĕ.
Савнине
Кивçен илнĕ чунпа сыватмаççĕ.
Кивçен илнĕ ăспа
Тăшманпа та,
Туспа та
Тавлашса ырăпа тухаймаççĕ.

***

Çынна мĕн кирлĕ?
Пурăнмашкăн – çурт,
Савмашкăн – арăм,
Выртмашкăн – вырăн,
Кулмашкăн кирлĕ кулăшла камит.
Камичĕ эпĕ хам пулам-и?
Нимĕн те пĕлмен халăх
Ман ухмахран кулса
Хăй ăслине ан мантăр.

***

Эй, аннеçĕм,
Хĕн-хурлă хуралçăм,
Хура хурамаçăм,
Сипетлĕ çăл шывĕн сассу мана пулчĕ,
Телее ĕненни ман шăпа кунĕнче пурнăç курчĕ.
Эп телейлĕ, аннеçĕм,
Санăн хĕнлĕ уру вăрçă вăхăчĕ витĕр
Çаруран шурă хĕл уйĕпе утса тухрĕ.
Эп телейлĕ, аннеçĕм!
Санăн шурă аллу Ăвăспуç вăрмань витĕр
Салтака ăшăтайрĕ. Тăм илсе хурлăх курчĕ.
Эп телейлĕ, аннеçĕм,
Эс пурришĕн,
Эс мана сыхланишĕн,
Вăрмантан çаруран таврăннишĕн,
Çав салтак фашизма тĕп тунишĕн,
Мана паян ĕçлеме,
Сывлама,
Юрлама,
Савăнма та
Сана юратма кун парса
Кантăкра кăвак çут хăпарнишĕн.

***

Пуçтарăнаççĕ сарă кайăксем
Эпĕ лартса ӳстернĕ пахчана.
Пуçтарăнаççĕ иртнĕ кунăмсем,
Ларса тухаççĕ хурама тавра.

Кашни саркайăк – савăнăçлă кун.
Нумайăн-и, сахаллăн-и вĕсем –
Çук, шутламастăп, канăçтăр çеç чун,
Ун хурлăхне çĕнтерччĕр иртнисем.

Иртнĕ телейĕм, эс мĕнпе пуян?
Мĕнпе пуянччĕ яшлăх? Вăй пуртан?
Пĕр кайăкĕ каларĕ:
– Савнăран,
Ырăсене манмасăр тăнăран.

***

Ман сассăм,
Янравĕпе те таппипе тулса,
Сăмах пулать.
Туссен, ютсен чĕрисене кĕрет
Сăмахăм,
Çавар уçма хăйман самантсенче
Майăран пăвать.
Чарма пăхсан, хирĕç тăрсан –
Хама çапать.

## Сăмах

Суя хупланă чăнлăха тупма
Хăюлăх кирлĕ. Сăмаха
Ăшри юнпа шăвармалла.
Сăмах вăл кăкăра ватса
Тухсан кăна снаряд пулать,
Суялăх керменне ватать.

Янравĕпе те таппипе тулса
Сăмахăм кăкăрта куматчĕ,
Çавар уçма хăйман самантсенче
Пыртан тухасшăн сывлăша пӳлетчĕ.

Çĕмрен пек
Кăкăра ватса тухсан –
Чылайăшне вĕлертĕм.
Чылайăшне
Тӳре-шара умне хурса
Çăра юна шĕветрĕм.

Эп хам та, ыттисем те
Хирĕç тăчĕç
Чăнлăх çути çутатнă Сăмаха –
Çапах сăнчăрласа пăрахаймарăм:
Паянхи кун вăл тахçанхинчен таса,
Тӳре-шара куçне йăмăхтарса:
– Чăн-чăн тӳре эс ху, – тет вăл мана.

Чăваш çынни мăнаçлăхне тупать:
Вăл тивĕçлă хăйне хăй тан пулма.

***

Кулăшли пулать вăл хăш чухне:
Кулăшла сăмах ваклатпăр,
Кулăшла утса пыратпăр,
Кулăпах çав пĕр-пĕрне
Ăнсăртран тĕксе яратпăр.

Тус-юлташ инçе пулсассăн
Кулăшла çыру çыратпăр,
Кулăшла парне яратпăр.
Кулăпах, хĕрсе кайсан,
Çамрăк чечеке таптатпăр.

Эй, эс, кулă, юлташа çăлсамччĕ!
Йăлтăр кулă, инкеке сирсемччĕ.
Çутă кулă, чĕрене кĕрсемччĕ,
Сарă хĕр чунне уçсамччĕ.

## Мăш пурнăç

Мăш та ан ту, пăш та ан ту,
Ан калаç,
Ан илт,
Ан кур!
Эс чĕлхесĕр,
Эс хăлхасăр,
Эс чĕресĕр те ӳпкесĕр,
Эс ухмах! Çакна манмасăр
Пурăн!
Чĕлхӳне татаççĕ – эсĕ мăш! кăна,
Тăванна таптаççĕ – эсĕ пăш! кăна.
Аслисен çӳл тĕпчине ларатăн.
Ырлăхсен ятне мухтав юрлатăн.
Аялтисене хăвартăн мăшкăла,
Хăвăн халăхна пусартăн пушăпа.




*Иосиф Трерăн пĕрремĕш те юлашки поэзи кĕнеки*

***

Чĕкеç чĕлхиллĕ пулаймарăм,
Чуна уçса сас кăлармарăм.
Кунтан тухса, кунтан кайсассăн
Телейлĕ пул...
Телейлĕ пул ырлăх курмашкăн,
Ырлăх çитсен, савни тупмашкăн,
Савни тупсан, хунав хушмашкăн
Телейлĕ пул.
Хаяр ӳксен чĕррĕн юлма,
Хĕвелпеле пĕрле тăма,
Çăлтăрупа çулна тупма
Телейлĕ пул.

Таçта çитсе темскер курсан та,
Инкек çине синкек тухсан та,
Эп кунтине манса кайсан та
Телейлĕ пул.

Ĕçес шыву сăваплă пултăр,
Çиес çăкру сăваплă пултăр,
Тăвас ĕçӳ ырăнлă пултăр,
Телейлĕ пул.

Яту сан ĕмĕре çуталтăр,
Ачу-пăчу тăпра шăвартăр,
Йывăррине Турă çĕклетĕр,
Телейлĕ пул!



*Иосиф Дмитриев артист хăй юратнă Çеçпĕл Мишши сăнарĕнче*

Сăваплă пул!

Иосиф Александрович манăн «Ванюк ĕçе хăнăхать» пьесăпа спектакль кăларчĕ. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче, вырăсла вăл «Ванюшкины каникулы» ятпа пырать. Пĕлтĕр театрта иртнĕ лабораторире «Ниме майри» пьесăна вуланă чух та лартасчĕ-ха кăна, лартатпăрах тенĕччĕ... Унтан ытла вара вăл мана «дипломлă пăрусем» çинчен çырмалла тесе калани халĕ те ун умĕнче парăмлă пулнине аса илтерсе тăрать. Ман юптарусен кĕнеки çапла ятлă – «Дипломлă Тиха». Хальхи çамрăксем хушшинче, чăн та, çакăн ятлă юптарури пек «тихасем» нумай. Анчах та Иосиф Александрович тиха вырăнне пăру тетчĕ, пьесăра та «пăрăва» тĕп сăнар тума калатчĕ. Чăвашсен «суламан пăру» каларăшне шута хурса пуль-ха ĕнтĕ. Çырма пуçламан-ха, çапах Иосиф Александровича сăмах панăскер çырасах пулать...

Влад ДИМОВ

ШУХĂШЛАР-ХА, ТĂВАНСЕМ

## Кутамкка çакса...

**Чăваш ялĕ пĕтсе пырать. Çамрăксем юлмаççĕ яла. Мĕншĕнне хăвăрах пĕлетĕр – ĕç çук. Ялта тĕпленнисем те Мускава та ытти пысăк хуласене танкаççĕ, çурçĕрте те Çĕпĕрте вахта мелĕпе тар тăкаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи пек. Арçынсем – килте мар, килте – хĕрарăмсем те ача-пăча, ваттисемпе сусăрсем çеç. Çитмен пурнăç культурăра ĕçлекенсене те кутамкка çактарчĕ, чăваш юрри-ташши, сăмахлăхĕ-ăслăйĕ анинче тăрăшмалли çынсем Мускаври стройкăсенче ĕçлесе çӳреççĕ...**

2000 çулсен пуçламăшĕнче «Хыпар» хаçата Владимир Макаров ĕçлеме килнĕччĕ. Шупашкарти Чăваш-туркă лицейне, кайран тата Мускаври Литература институтне вĕренсе пĕтернĕскер, хăйне евĕр шухăшлавлă, акăлчанла тата турккăлла питĕ лайăх пĕлекенскер, нумай вуланăскер юрăхлă пулаймарĕ-тĕр – кутамкка çакса пуртăпа та мăлатукпа ĕçлеме тухса кайрĕ...

Çак хаçатрах Валентин Петров журналист ĕçлетчĕ, юлашки çулсенче Крым кĕперне тунă çĕрте тар тăкать теççĕ...

Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕнче Сергей Никитин пултаруллă артист ĕçлетчĕ... «Чĕрĕ сăмах» спектакльти Поэт, «Лир патша» спектакльти Эдмунд сăнарĕсем халĕ те ман куç умĕнче. Ун пек тек никам та калăплаймĕ ку сăнарсене. Урăххарах выляма пултарĕç, ун пек чаплă – çук. Манăн пьесăпа лартнă «Ванюк ĕçе хăнăхать» спектакльте унăн сăнарĕ – Колорадо нăррин сăнарĕ – пысăк та мар ĕнтĕ, анчах мĕнле вылятчĕ-ха вăл ăна! Чăн-чăн артист. Турă пани каламасăрах курăнать. Витĕр курăнать. Çак пултаруллă çамрăкăн та Мускава тухса кайма тиврĕ... Çак театртах ĕçлекен тата темиçе çамрăк тухса кайрĕç, каллех Мускава, каллех пысăкрах укçа ĕçлесе илес тĕллевпе...

И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи преподавательсем тата... Чăваш чĕлхипе литературине тĕпчекенсем-вĕрентекенсемех миçен стройкăсене сулланчĕç. Енчен те ĕлĕк наукăра чăваш арĕсем пит пултаруллă пулнă-тăк, паян ку ĕç черчен хĕрарăмсем çине тиенчĕ.

Ку списока тата та тата тăсма пулать...

Çак шухăша вулакансене çырса пĕлтересси çинчен каласан юлташăм та тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ: «Эс пĕлетĕн-и миçе чăваш паянхи кун Мускавра хурал тăнине? Вĕсем хушшинче наука кандидачĕсем те, шкул директорĕсем те, ытти пултаруллă çынсем те самай...»

Хăй вăхăтĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕн администрацийĕнче культура пайне ертсе пынă Олег Залогин поэт, юрăç, бард, композитор калани те аса килчĕ (вăл та хурал тăратчĕ ун чухне Мускавра): «Эп хурал тăни темех мар-ха вăл, пирĕнпе пĕрле тата профессор ĕçлет, вăл космос карапĕсем тунă çĕрте вăй хунă, халĕ хурал тăрать!»

Мĕнле çĕршыв-ха вăл пирĕн? Хурал тăнăшăн йĕркеллĕ тӳлеççĕ, пуç ватса тем тепĕр шутласа кăларса ĕçлекенсене çемйисене тытса тăмалăх та памаççĕ.

Чăваш культуринче (театрĕ, литератури, юрри-кĕвви, ӳнерĕ...) тата ăслăлăхĕнче (чăваш чĕлхи, литература критики, театр критики, этнографи, археологи...) паян кадр ытăвĕ питĕ çивĕч тăни паллă. Çамрăксем çук. Çамрăксемшĕн наукăпа культура кăсăк мар, мĕншĕн тесен кунта ĕç укçи пĕчĕк. Çамрăкăн вара хваттерне те туянас, çынсем пек пурăнас та килет.

Енчен те кадрсем енĕпе паян та çапла йывăрлăхсем пулсан, ыран – тивĕçлĕ канăва тухма вăхăчĕсем çитнĕ шурсухалсем ĕçлеме пăрахсан – мĕн курăпăр? Е ун чухне чăваш чĕлхи те, чăваш литератури те, чăваш театрĕ те, чăваш тĕнчине тĕпчекен ăслăлăхсем те кирлĕ пулмĕç-ши ĕнтĕ? Ку хайхи ыран темиçе вунă, çĕр çултан мар, темиçе çултанах çитме пултарать-çке. Çавнашкал хаваслах мар лару-тăру пирĕн...

Эх, çав Володя Макаров ăçта çӳрет-ши халь? Унăн пуçĕпе те ăсĕпе чăваш халăхĕшĕн ĕçлес вырăнне ютра çӳрет-çке. Е пирĕн чĕлхеçĕсем хушшинче турккăлла, акăлчанла тап таса пĕлекенсем туллиех-ши вара?

Сергей Никитин тата мĕн тăвать-ши? Шел, талант пĕтет. Санăн вырăну сцена çинче-çке, Сергей, сцена çинче...

Хăшĕсем вара «Чăвашра яланах ĕç алли кирлинчен ытларах пулнă» теççĕ. Хăçан паянхи кун çинчен кăна шутласа пурăнма пăрахăпăр-ши эпир?

**Чăвашра та йĕркеллĕ ĕç укçи тӳлеме пуçласса шанса**

Владислав НИКОЛАЕВ